27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ДЕКАБРЬ
2
ШАМАТКУН
236(6731) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМЕПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН
ХАҪАЧӖ

Тракторсене вӑхӑтра тата лайӑх юсамалла

Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 27 ҫул тултарни ҫинчен Сталин юлташ тунӑ историллӗ докладпа хавхаланса, пирӗн республикӑри МТС-сенчи трактористсемпе трактористкӑсем, пӗтӗм совет халӑхӗ пекех, социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн хумне тӑтах та анлӑнрах ҫӗклентерсе ячӗҫ, тракторсене юсаса ҫуракине хатӗрлес тӗлӗшпе хӑйсем ҫине конкретлӑ обязательствӑсем илсе, вӗсене пурнӑҫа кӗртессишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Малта пыракан МТС-сен коллективӗсем хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Иртнӗ ҫулхи пекех, тракторсене юсас тӗлӗшпе Йӗпреҫ МТС-ӗ малта пырать. Вӑл тӑваттӑмӗш кварталта тракторсем юсамалли хӑйӗн планне ноябрӗн 24-мӗшӗ тӗлнех тултарчӗ. Ун хыҫҫӑн Красноармейски МТС-ӗ 17 трактор юсаса, плана пурнӑҫларӗ. Паян пирӗн хаҫатра Шӑхасан МТС директорӗ Константинов тата старши механик Северов юлташсен телеграмми пичетленсе тухать. Шӑхасан МТС-ӗн план тӑрӑх тӑваттӑмӗш кварталта 16 трактор юсамалла пулнӑ, вӗсем 19 трактор юсанӑ. МТС коллективӗ тракторсене 1945 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмӗшпех юсаса пӗтерме обязательство илнӗ. Халӗ кунта ҫак ответлӑ та чыслӑ обязательствӑна пурнӑҫлассишӗн трактористсемпе трактористкӑсем тата тракторсене юсанӑ ҫӗрте ӗҫлекен рабочисем кунне-ҫӗрне пӗлмесӗр тӑрӑшаҫҫӗ.

Анчах та, пӗтӗм республикипе илсен, тракторсене юсас ӗҫ ҫителӗксӗр пырать-ха. Пирӗн республикӑри МТС-сен тӑваттӑмӗш кварталта 420 трактор юсамалла. Районсенчен илнӗ сведенисем тӑрӑх, халӗ пурӗ те 102 трактор ҫеҫ юсанӑ, ку вӑл 24 процент кӑна пулать. Уйрӑмӑнах гусеницӑллӑ тракторсене юсасси чӑтма ҫук начар пырать. Ҫак тракторсене юсама нумай МТС-сенче пачах тытӑнман.

Тракторсене юсас ӗҫ Ҫӗмӗрле, Шӑмӑршӑ, Сӗнтӗрвӑрри, Кувакино, Калинино тата ытти хӑшпӗр МТС-сенче начар пырать. Кунта запаслӑ пайсем ҫук тесе алла сулса лараҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах асӑннӑ МТС-сенче тракторсене юсамалли вырӑнсене кирлӗ пек йӗркелемен, станоксене, инструментсене хатӗрлемен тата юсас ӗҫе МТС-ри пур кадрсене те мобилизацилемен.

Нумай МТС-сен руководителӗсем запаслӑ пайсем ҫукки пирки калаҫаҫҫӗ. Вӑл йывӑрлӑх пурри пирки пурриншӗн те паллӑ. Анчах та вӑл йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме условисем пуррине кӑтартса паракан тӗслӗхсем те сахал мар. Йӗпреҫ, Красноармейски, Шӑхасан, Вӑрнар, Куславкка МТС-сенче те вӑл йывӑрлӑхсем пур, анчах вӗсем йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме хӑйсен МТС-ӗсенчи ҫынсене пӗлсе мобилизациленӗ. Юлашки икӗ ҫул хушшинче тракторсене юсас ӗҫре ҫак МТС-сем малта пыни мӗнрен килет-ха? Чӑн малтанах, кунта тракторсемпе усӑ курас ӗҫре обезличкӑна пӗтернӗ. Трактористсем хӑйсем ҫумне ҫирӗплетнӗ машинӑпа ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ, ӑна кулленех пӑхаҫҫӗ тата юсас ӗҫре те хӑйсемех ӗҫлеҫҫӗ. Ҫирӗплетсе панӑ машинӑшӑн ответлӑха туйса ӗҫлени, трактора тата унӑн пайӗсене яланах упраса ӗҫлени обезличкӑна, машина ҫине чунсӑрран пӑхассине пӗтерет, тракторӑн ӗҫри кунҫулне тӑсать. Тракторсене юсама Йӗпреҫ МТС-ӗнче тырпул вырса пухас ӗҫсем хӗрсе пынӑ вӑхӑтрах хатӗрленнӗ. Станоксене, инструментсене тата трактор валли кирлӗ пайсене хатӗрлеме тытӑннӑ. Ҫавна пула, тракторсене юсама тытӑнсан, ӗҫ ӑнӑҫлӑн тата хӑвӑрт пулса пынӑ.

Тракторсене юсас ӗҫ иртнӗ ҫулсенче кайра пынӑ Чкаловски, Первомайски, Пӑрачкав МТС-ӗсенче те чылай аван пырать. Ҫак МТС-сем кӑҫал тракторсене юсас ӗҫре малти вырӑнта пулассишӗн, ҫуракине лайӑх хатӗрленсе кӗтсе илессишӗн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Паллах, МТС-сене пирӗн республикӑри промышленность предприятийӗсем запаслӑ пайсем хатӗрлес тӗлӗшпе пысӑк пулӑшу пама пултараҫҫӗ тата памалла та. Анчах, калас пулать, Канашри вагонсем юсакан заводпа хӑшпӗр предприятисемсӗр пуҫне, нумайӗш заводсем Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ октябрӗн 7-мӗшӗнче йышӑннӑ постановлени кирлӗ пек пурнӑҫласа пымаҫҫӗ-ха. Сӑмахран, Шупашкарти «Металлист» артель ҫак кварталта 14 шӑллӑ 100 шестерня хатӗрлемелле пулнӑ, кунта пурӗ те 4 ҫеҫ хатӗрленӗ, ытти пайсене пачах хатӗрлемен. МТС-сем валли кирлӗ пайсене хатӗрлес ӗҫе пурнӑҫламан заводсем республикӑра татах та пур. Тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисем валли кирлӗ пайсене хатӗрлесси вӑл — правительство заданийӗ. Ана пӗр пӑркаланмасӑр, срокра пурнӑҫламалла.

Уйрӑмӑнах республикӑри «Тракторосбыт» контори япӑх ӗҫлет. Ҫак конторӑн управляющийӗ Марков юлташ начар ӗҫленӗ пирки кӑна республикӑри МТС-сем тӗрлӗ пайсене шырама аякри хуласене хӑйсен представителӗсене ярса вӑхӑта ирттереҫҫӗ. «Тракторосбыт» контори трактор пайӗсене кӳрсе килес пирки нимӗн те тумасть.

Тракторсене юсасси — пысӑк та ответлӑ ӗҫ. Ҫак ӗҫре, чӑн малтанах, пахалӑх ҫине ҫавӑрӑнса пӑхмалла. Иртнӗ ҫураки вӑхӑтӗнче пулнӑ уйрӑм юрӑхсӑр тӗслӗхсене МТС-сен дирекцийӗсемпе тракторсене йышӑнакан государство комиссисен асра тытмалла. Иртнӗ ҫуракине хатӗрленнӗ чухне Канаш, Шупашкар, Сӗнтӗр МТС-ӗсем тракторсене юсаса пӗтерни ҫинчен ҫуракине тухиччен нумай малтан пӗлтерчӗҫ. Анчах та ҫуракин малтанхи кунӗсенчех Шупашкар МТС-ӗнче 5 трактор ӗҫлӗмерӗ, вӗсене хӗрӳ ӗҫ вӑхӑтӗнче юсама тиврӗ. Ҫакӑн пек юрӑхсӑр тӗслӗхсем Сӗнтӗр, Канаш МТС-ӗсенче те пулнӑ. Ҫаксем вӗсем тракторсене юсас тата юсанӑ тракторсене йышӑнас ӗҫре кӑҫал пысӑк урок пулса тӑмалла. Ыҫӗн хӑвӑртлӑхӗпе пӗрлех, ӗҫ пахалӑхӗ ҫине хытӑ ҫавӑрӑнса пӑхмалла. Тракторсене йышӑнакан государство комиссийӗн йышӑннӑ тракторсемшӗн ответлӑ пулнине яланах асра тытмалла.

Трактористсемпе трактористкӑсем хушшинче Сталин юлташӑн докладне тӗплӗн ӑнлантарса парса, тракторсене юсас ӗҫ тавра социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ярас пулать. Тӑваттӑмӗш кварталта юсамалли пӗтӗм тракторсене декабрь уйӑхӗнче пӗтӗмӗшпех юсаса пӗтермелле. ВКП(б) райкомӗсемпе райсовет исполкомӗсен тракторсене юсас ӗҫре ӗҫлекен трактористсене, трактористкӑсене тата рабочисене кирлӗ пек условисем туса парас ӗҫре МТС директорӗсене кулленех пулӑшса пымалла. МТС-сенчи механиксен, бригадирсен ӗҫри паха опытне пур трактористсем хушшинче те сарассишӗн тата рационализаторла сӗнӳсене пурнӑҫлассишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлемелле.

МТС коллективӗсемшӗн халӗ тракторсене юсасси чи паха та ответлӑ ӗҫ пулса тӑрать. Ҫак ӗҫе вӑхӑтра тата чыслӑн пурнӑҫлассишӗн ывӑнма пӗлмесӗр, пӗтӗм вӑйхала хурса кӗрешмелле.

Франци республикин Вӑхӑтлӑх Правительствин пуҫлӑхӗ де Голль генерал Совет Союзне килни

БАКУ, ноябрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Ноябрӗн 27-мӗшӗнче 14 сехетре Баку хулине Франци республикин Вӑхӑтлӑх Правительствин пуҫлӑхӗ генерал де Голль тата унпа пӗрле тухнӑ ытти ҫынсем те ҫитнӗ. Аэродромра де Голль генерала Азербайджан ССР Правительствин представителӗсем тата Наркоминделпа Оборона Халӑх Комиссарийӗн де Голль генерала йышӑнма Мускавран килнӗ представителӗсем хирӗҫ тухса кӗтсе илнӗ.

Аэродрома Францин тата Совет Союзӗн флагӗсемпе илемлетнӗ, хисеплӗ хурал тӑратнӑ. Оркестр Францин тата Совет Союзӗн гимнӗсене каланӑ. Каҫхине де Голль генерал Азербайджанри опера театрӗнче «Кер Оглы» спектакль курнӑ.

Ҫанталӑк начар тӑнӑ пирки де Голль генерал тата унпа пӗрле килнӗ ытти ҫынсем тепӗр кунне Бакуран Мускава хӑйне уйрӑм поездпа кайнӑ.

* * *

СТАЛИНГРАД, ноябрӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Франци республикин Вӑхӑтлӑх Правительствин пуҫлӑхӗ де Голль генерал тата унпа пӗрле килнӗ ытти ҫынсем Мускава кайнӑ май паян хӑйне уйрӑм поездпа Сталинграда ҫитнӗ. Вокзалта де Голль генерала вырӑнти власть представителӗсем хирӗҫ тухса кӗтсе илнӗ. Вокзалтан де Голль генерал Облисполкома кайнӑ. Унта вӑл француз халӑхӗ ячӗпе Сталинград хулине мемориальнӑй хӑма панӑ. Ҫав парнепе панӑ чухне де Голль генерал ҫапла каланӑ: «Господин, хула Совечӗн председателӗ! Эпӗ Сире тата пӗтӗм Сталинград хулине Сирӗн ӑшӑ сӑмахсемшӗн тата Эсир мана кунта ҫапла йышӑннӑшӑн тав тӑватӑп. Эпӗ Сталинграда тивӗҫлипе тав тӑвасшӑн, вӑл пире пурне те кӑтартса панӑ урока паллӑ тӑвасшӑн. Эпӗ геройла Сталинграда кӗрешекен француз халӑхӗнчен хӗрӳллӗ салам калатӑп. Сталинград хули эпир пурӗ пӗрле тӑшмана ҫӗнтерсе тӑкассине кӑтартса тӑрать. Сталинград эпир тӑшмана ҫӗнтерсе тӑкассине кӑна мар кӑтартса тӑрать, вӑл киревсӗр Германие хирӗҫ пӗрлешнӗ союзниксем пурте пӗрле мӗн тума пултарнине питӗ лайӑх кӑтартса тӑрать. Германи малашне нихҫан та демократиллӗ ҫӗршывсене хирӗҫ вӑрҫма хӗҫпӑшал ҫӗклеме пултараймӗ. Эпӗ геройла Сталинграда француз халӑхӗн пысӑк мар, анчах та чунтан-чӗререн панӑ парнине паратӑп.

Сывӑ пултӑр геройла Сталинград!

Сывӑ пултӑр эпир пӗрлехи тӑшмана ҫӗнтересси!»

Хула Совечӗн председателӗ Пигалев юлташ де Голль генерала саламласа сӑмах каланӑ, вӑл ӑна панӑ парнешӗн тав тунӑ. Де Голль генерал кун хыҫҫӑн хулари паллӑ вырӑнсене кайса курнӑ. Сталинградри трактор заводӗнче пулнӑ. Каярахпа де Голль генерала «Сталинград» ятлӑ кинофильма кӑтартнӑ.

Ҫав кунах де Голль генерал тата унпа килнӗ ытти ҫынсем Сталинградран Мускава тухса кайнӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

НОЯБРӖН 30-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Ноябрӗн 30-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем Чехословаки ҫӗрӗнче, тӑшманпа ҫапӑҫса, 30 ял ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — БЕРЕЗНИЦА, МИНЬОВЦЕ, КЕЛЧА, ВЕЛИКАЯ ДОМАША, ДОМАША, НИЖНИЙ ГРАБОВЕЦ, НИЖНИЙ ГРУШОВ, РАКОВЦЕ, МОРАЗЬЯНИ МАРКОВЦЕ, ЗЕМПЛИН ятлӑ пысӑк ялсем.

УКРАИНАРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла наступлени туса пырса, ноябрӗн 30-мӗшӗнче ҫулйӗрсен паха узелӗсене тата тӑшман оборонин тӗреклетнӗ паха пункчӗсене — Венгрин округ центрӗсене ЭГЕР хулипе СИКСО хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, БЕКЕЧ, МЕДЬАСО, КИШ-ДОБСА, АРНОТ, ВАРАШИ, КАЧ, НОСВАЙ ялӗсене йышӑннӑ.

ПЕЧ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫаплах малалла наступлени туса пынӑ, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ДЭЧ, ЭДЕНЬ, КАКАШД, САЛКА, БЕРЖЕНЬ, МЕЧЕНЬ, ЦИКО, ПЕЧВАРАД, ВАШАШ, НЕМЕТИ, БИШЕ, ШИКЛОШ, ОЛД ятлӑ пысӑк ялсем тата САРПИЛИС, ОБЕРЕК, ДЭЧ, ЭЧЕНЬ, ХИДАЖ-БОНЬХАД, НАДЬ ПАЛЛ, ПЕЧВАРАД, ЧОКОЛАДЭ, ШИКЛОШ чугун ҫул станцийӗсем.

Югослави ҫӗрӗнче пирӗн ҫарсем, Югославин халӑхӗн ирӗклӗх ҫарӗн чаҫӗсемпе пӗрле кӗрешсе, КРАЛЬЕВО хулипе чугун ҫул узелне туртса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

Ноябрӗн 29-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 29 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

☆ ☆ ☆

Чехословакире пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла куҫса пынӑ. Гуменне хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тӑшман хӑйӗн лӳчӗркесе пӗтернӗ чаҫӗсене ҫӗнӗ вӑйсем парса вӑйлатнӑ та темиҫе хутчен те контратакӑна кӗре-кӗре кайнӑ. Совет чаҫӗсем тӑшман контратакисене пурне те сирсе янӑ, унтан флангсенчен пырса ҫапнӑ та нимӗҫсене каялла хӑваласа янӑ. Сӑртлӑ-вӑрманлӑ вырӑнта ҫапӑҫса малалла куҫса пырса, пирӗн ҫарсем Ондава шывӗ ҫине тухнӑ. 400 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсенчен 2 танк, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 4 тупӑ, 14 хир туппи, винтовкӑсемпе автоматсем нумай тытса илнӗ. 130 гитлеровеца тыткӑна илнӗ.

* * *

Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсем ҫаплах ӑнӑҫлӑ наступлени туса пынӑ. Вӑйлӑ ҫапӑҫусем хыҫҫӑн пирӗн чаҫсем Сиксо хулине тытса илнӗ. Тӑшман оборонин ҫав тӗреклетнӗ паха пунктне пырса кӗмелли вырӑнсенче кӑна совет боецӗсем 700 гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ, нимӗҫсемпе венгерсен 350 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. 18 тупӑ, 32 пулемет, 2 боеприпас складӗ тата ытти трофейсем те тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн ҫарсем Эгер хулине туртса илнӗ. Эгер хули нимӗҫсен Карпат тӑвӗсен кӑнтӑр юпписем ҫинчи оборонин тӗп узелӗсенчен пӗри пулнӑ, ҫавӑнпа ӑна тӑшман питӗ хытӑ хӳтӗленӗ. Ҫырма-ҫатраллӑ вырӑнпа усӑ курса, нимӗҫсем хулана пырса кӗмелли вырӑнсем ҫинче вӑйлӑ укреплениссем туса тултарнӑ. Тыткӑна лекнисем ҫапла каласа кӑтартнӑ: нимӗҫсен командованийӗ хӑйӗн ҫарӗсене тем килсе тухсан та Эгер хулине аларан ямалла мар тесе приказ панӑ. Пирӗн ҫарсем Эгер хулинчен хӗвелтухӑҫ енчен тата кӑнтӑр енчен иртсе кайнӑ та хула гарнизонне ҫавӑрса илме пуҫланӑ. Тӑшманӑн ирӗксӗрех, хӑйӗн тӗп участокне вӑйсӑрлатса, флангсене ҫирӗплетмелле пулнӑ. Ҫавӑнпа усӑ курса, пирӗн ҫарсем тӑшмана кӑнтӑртан пырса ҫапнӑ та чугун ҫул станцине тытса илнӗ, унтан вара хула урамӗсене вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Совет боецӗсем квартал хыҫҫӑн квартала гитлеровецсенчен тасатса пынӑ, вара паян каҫпа Эгер хулине пӗтӗмӗшпех туртса илнӗ. Нимӗҫсемпе венгерсен 400 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. Хӗҫпӑшал тата вӑрҫӑ хатӗрӗсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Печ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем тӑшмана халӑх пурӑнакан чылай пунктсенчен хӑваласа кӑларнӑ. Ҫулсен узелӗ пулса тӑракан Шиклош ялне тытса илнӗ. Пирӗн ҫарсем пыра-пыра ҫапнипе каялла чакакан нимӗҫсем сынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухатусем тӳсеҫҫӗ. Пӗр участокра кӑна тӑшман пехотин икӗ батальонне вӗлерсе пӗтернӗ, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 7 тупӑ, артиллерипе миномётсен 6 батарейине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Югославире, Белград хулинчен кӑнтӑрарахра пирӗн ҫарсем, Югослави халӑхӗн ирӗклӗх ҫарӗн чаҫӗсемпе пӗрле кӗрешсе, Кральево хулипе чугун ҫул узелне туртса илнӗ. Ҫак хулашӑн пынӑ ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 300 салтакӗпе офицерӗ вилсе пӗтнӗ. Нимӗҫсенчен пӗр самолет, 4 танк, 22 трактор, 60 автомашина, 49 паровоз, 2.150 вагон (вӗсенчен 700 вагонӗ ҫӗркӑмрӑк тиенӗскерсем) тытса илнӗ.

* * *

Балтика тӑрӑхӗнчи 1-мӗш фронтра нимӗҫсен 263-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 485-мӗш полкӑн 2-мӗш батальонӗн тыткӑна лекнӗ командирӗ Антон Хейфельдер ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Пирӗн дивизие фронтӑн ҫӗнӗ участокне куҫарни нумаях та пулмасть. Манӑн батальон хӑйӗн позицийӗсене йышӑнсан, мана ҫав позицисене юлашки салтак юлмиччен тытса тӑма ҫирӗппӗн те ҫирӗп приказ пачӗҫ. Темиҫе кун каярах совет подразделенийӗсем пирӗн позицисене икӗ енчен те атакӑларӗҫ. Часах вырӑс автоматчикӗсем батальонӑн командной пункчӗн тылӗнче пеме пуҫларӗҫ. Ротӑсем йывӑр ҫухатусем тӳсрӗҫ. Анчах та ҫав ҫухатусем чӑннипех мӗнле пулнине, паника пуҫланса кайнӑ пирки, пӗлме пулмарӗ. Ман ҫумра 7 салтак кӑна тӑрса юлчӗ, вара эпӗ вӗсемпе пӗрле тыткӑна парӑнтӑм. Тыткӑна лексен, эпӗ кунта батальонри Георг Штайн обер-лейтенанта, Людвиг Шмидт лейтенанта тата салтаксене те нумайӗшне тӗл пултӑм».

Юлашкинчен Хейфельдер ҫапла каланӑ: «Тукумс хулипе Либава хули хушшинчи районра нимӗҫсене 30 дивизирен ытла ҫавӑрса илнӗ. Вӗсен пурнӑҫӗ мӗнле пӗтесси ҫинчен иккӗленмелли ҫук. Ҫавӑн пек ҫавӑрса илнӗ ӗҫсем хӗвелтухӑҫӗнче яланах мӗнле пӗтнине эпир хамӑр тӳссе курнӑ. Хӑшпӗр «хурансем» питӗ сахалччен тытӑнса тӑнӑ, теприсем чылай вӑхӑт хушши тытӑнса тӑнӑ, анчах вӗсене пурне те пурӗ пӗрех вырӑссем пӗтерсе лартнӑ. Балтика тӑрӑхӗнче ҫавӑрса илнӗ дивизисен пурнӑҫӗ те ҫавӑн пекех пӗтет ӗнтӗ. Тинӗспе кайма ҫук ӗнтӗ, ҫӗр ҫинче те татса тухма май ҫук. Хӑйӗн 30 дивизине пӗтерсе лартса, Гитлер вӑхӑт тупма шанать. Темиҫе ҫӗр пин нимӗҫе вӗлерсе, вӑл хӑйӗн пурнӑҫӗ пӗтессине тӑсма тӑрӑшать».

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

ССР Союзӗнчи финанс органӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗнче мала тухнӑ финанс органӗсене памалли премисем ҫинчен

Чӑваш АССР Совнаркомӗ 1944 ҫулхи тӑваттӑмӗш кварталти плана тултарас тӗлӗшпе малта пыракан финанс органӗсем валли (вӑл шута перекет кассисем тата страховани инспекцийӗсем те кӗреҫҫӗ) ҫакӑн пек премисем тунӑ:

а) 1-мӗш преми — Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавӗ тата 15.000 тенкӗ укҫа. Вӑл шутран 1.500 тенкӗ районри финанс отделӗн заведующине памалла.

б) 2-мӗш преми — 10.000 тенкӗ укҫа. Вӑл шутран 1.000 тенкӗ районри финанс отделӗн заведующине памалла.

в) виҫҫӗмӗш преми — 5000 тенкӗ укҫа. Вӑл шутран 800 тенкӗ районри финанс отделӗн заведующине памалла.

Халӑх пултарулӑх ҫурчӗсен директорӗсен Пӗтӗм Союзри канашлӑвӗ

Ноябрӗн 29-мӗшӗнче Мускавра республикӑсемпе облаҫсенчи Халӑх пултарулӑх ҫурчӗсен директорӗсен канашлӑвӗ уҫӑлнӑ. Канашлӑва делегатсем 40 пысӑк хуларан пынӑ тата унта артистсем, музыкантсем, художниксем, искусствоведсем, консерватори профессорӗсем пур.

— Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче, — тенӗ Искусство комитечӗн председателӗн заместителӗ Солодовников юлташ, канашлӑва уҫса, — художествӑллӑ пултарулӑх ӗҫӗ чакман, вӑл тата ытларах ӳссе кайнӑ. Сӑмахран, Украинӑна нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ хыҫҫӑн унта 11 пин кружок уҫӑлнӑ.

Художествӑллӑ пултарулӑха вӑйлатса пырасси ҫинчен О. Малахова юлташ доклад тунӑ. Вӑл ҫапла каланӑ: хальхи вӑхӑтра пирӗн ҫӗршывра 100 пин кружока яхӑн ӗҫлет, вӗсем икӗ миллион ҫынна яхӑн пӗрлештерсе тӑраҫҫӗ.

Художествӑллӑ пултарулӑх ҫыннисем фронтсенче, призыв пункчӗсенче тата ҫапӑҫури ҫара каякан чаҫсем валли темиҫе ҫӗр концерт лартса панӑ. Ленинградри милици клубӗнчи кружок, хула оборонин малти линине пытанса пырса, унта концертсем панӑ.

Докладчик Халӑх пултарулӑх ҫурчӗсен ӗҫӗсем ҫинчен нумай калать. Ҫавӑн пек ҫуртсем пирӗн ҫӗршывра 105 шутланаҫҫӗ. Килес ҫул тата 27 ҫурт уҫмалла.

Канашлу темиҫе кун пырать. (ТАСС).

Совет Союзӗн Виҫӗ хут Геройӗ гварди полковникӗ А. И. Покрышкин Мускавра пулнӑ чухне Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ те Сталинла премин лауреачӗпе С. А. Лавочкинпа тӗл пулса калаҫнӑ. А. И. Покрышкин С. А. Лавочкина унӑн «Лавочкин-5» йышши истребителӗсем питӗ лайӑх ӗҫлени ҫинчен каласа панӑ. С. А. Лавочкин А. И. Покрышкина хӑйӗн малашнехи ӗҫӗсен планӗпе паллаштарнӑ.
Ӳкерчӗк ҫинче: С. А. Лавочкин (сылтӑмра) А. И. Покрышкинпа калаҫать.
А. ЛЕСС фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Финанс планне тултарса ҫитермелли уйӑхлӑх

Квартал планне срокчен тултараҫҫӗ

КУСЛАВККА, декабрӗн 1-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри нумай ялсоветсем финанс планне тултарса ҫитермелли уйӑхлӑха активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Юлашки кунсенче укҫа-тенкӗ пухас ӗҫ лайӑхланса пырать. Район тӑваттӑмӗш кварталти плана паянхи кун тӗлне 90 процент тултарчӗ. Районра уйрӑмӑнах пасар укҫи пухасси ӑнӑҫлӑн пырать. Пӗтӗмпе 93.000 тенкӗ пухмалла пулсан, ку таранччен 106.000 тенкӗ пухнӑ.

Партипе совет организацисем, финанс планне тултарса ҫитермелли уйӑхлӑха ӑнӑҫлӑн ирттерес шутпа, ялсемпе колхозсене ҫынсем ячӗҫ.

М. ОГОРОДНИКОВ.

Малта пыракан ялсоветсем плана тултарчӗҫ

СЕНТӖРВАРРИ, декабрӗн 1-мӗшӗ. (Телефонпа). Финанс планне тултарса ҫитермелли уйӑхлӑха хутшӑнса, нумай ялсоветсем хӑйсен ӗҫне чылай лайӑхлатрӗҫ. Паянхи куна кварталти финанс планне Сутчево, Водолеево, Кушниково ялсовечӗсем ирттерсе тултарчӗҫ.

Районри партипе совет организацийӗсем укҫа-тенкӗ пухмалли плана тултарассишӗн куллен тимлӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Халӗ ялсемпе колхозсенче районри партипе совет активӗнчен уйӑрса янӑ ҫынсем ӗҫлеҫҫӗ.

А. МИТРОФАНОВА.

Укҫа тенкӗ пухас ӗҫе хакламан ҫӗрте

МУРКАШ, декабрӗн 1-мӗшӗ. (Телефонпа). Районра укҫа-тенкӗ пухас ӗҫ халӗ те ҫителӗксӗр хӑвӑртлӑхпа пырать-ха. Тӑваттӑмӗш кварталти плана ноябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне 50 процента яхӑн ҫеҫ тултарнӑ. Уйрӑмӑнах Шетмӗпуҫ, Матьӑк, Шурча, Юҫкасси ялсовечӗсем кая юлса пыраҫҫӗ. Вӗсем кварталти плана 10 процент таран ҫеҫ тултарнӑ.

Хӑшпӗр ялсоветсенче финанс планне тултарас ӗҫре ялти актив та начар тӗслӗхсем кӑтартать. Акӑ, сӑмахран, Шетмӗпуҫ ялсовечӗн председателӗн М. Красновӑн 2.174 тенкӗ, ялсовет секретарӗн С. Семеновӑн 1.600 тенкӗ, «Звезда» колхоз председателӗн Я. Николаевӑн 1.204 тенкӗ парӑм шутланать. «Шубоси», «Красное Отечево» колхозсен председателӗсем те хӑйсен парӑмӗсене вӑхӑтра тӳлемеҫҫӗ.

Укҫа-тенкӗ пухмалли плана тултарасси кая юлса пыни, чи малтан, финанс работникӗсенчен килет. Районри финанс отделӗн работникӗсем вӑхӑта кабинетра ларса ирттереҫҫӗ. Шетмӗпуҫ ялсоветӗнчи финанс агенчӗ Анисимова, Очкасси ялсоветӗнчи финанс агенчӗ Измайлов колхозниксемпе колхозницӑсем патне сахал тухса ҫӳреҫҫӗ.

Халӗ республикӑра финанс планне тултарса ҫитермелли уйӑхлӑх пырать. Анчах та ҫав уйӑхлӑха хутшӑнса укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе лайӑхлатас тӗлӗшпе татӑклӑ мерӑсем йышӑнман-ха.

Ф. МАЛЫШКИН.

Укҫапа япаласен 4-мӗш лотерейин билечӗсене сарнин итогӗсем

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑра совет халӑхӗ гитлерла Германин хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене ҫапа-ҫапа аркатать. Паттӑр Хӗрлӗ Ҫар пирӗн Тӑван ҫӗршыва фашистла нимӗҫ захватчикӗсенчен тасатса ҫитерчӗ.

Совет ҫыннисем тылра лайӑх ӗҫлесе пыни Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑй-хӑватне ӳстерет. Рабочисемпе колхозниксем, интеллигентсем Тӑван ҫӗршыв умӗнчи парӑмсене чыслӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе пырса, фронта хӗҫпӑшалсем, боеприпассем, апат-ҫимӗҫ ҫитерсе тӑраҫҫӗ.

Совет халӑхӗ тӑшмана ҫапса аркатас ӗҫре государствӑна тылра паттӑр ӗҫленипе кӑна мар, хӑйӗн ытлашши укҫи-тенкине ҫӗнтерӳ тума панипе те пулӑшать. Ҫакӑ вӑл рабочисемпе колхозниксем, служащисем государство кӑларакан заемӑн облигацийӗсене тата укҫапа япаласен лотерейисен билечӗсене пысӑк хаваслӑхпа ҫырӑнса илнинчен те аван курӑнать.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче кӑларнӑ государство заемӗсем, укҫапа япаласен лотерейисен билечӗсем кӗске вӑхӑтрах малтан палӑртса хунӑ суммӑран нумай ытларах саланнӑ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмӑнах пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем хушшинче укҫапа япаласен 4-мӗш лотерейин билечӗсем хӑвӑрт саланнине паллӑ тумалла. Ку лотерея билечӗсене 7 кун хушшинче 44 миллион та 743 пин тенкӗлӗх салатнӑ. Ноябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне лотерея билечӗсемшӗн 32 миллион та 942 пин тенкӗ укҫа пухнӑ.

Укҫапа япаласен 4-мӗш лотерейин билечӗсене сарас тата билетсемшӗн укҫа пухас тӗлӗшпе уйрӑмӑнах Октябрьски, Вӑрмар, Чурачӑк, Шупашкар, Ҫӗрпӳ, Тӑвай, Сӗнтӗрвӑрри тата Муркаш районӗсем лайӑх ӗҫлерӗҫ. Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫак районсен исполкомӗсене укҫапа япаласен 4-мӗш лотерейин билечӗсене сарас тата билетсемшӗн укҫа пухас тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлекен активистсене премилеме укҫа уйӑрса панӑ. Ҫавнашкалах укҫапа япаласен лотерейин билечӗсене сарассине Канаш, Улатӑр тата Шупашкар хулисенче организованно ирттернӗ. Анчах Улатӑрпа Шупашкар хулисем билетсемшӗн укҫа пухас тӗлӗшпе питех те кая юлса пыраҫҫӗ.

Хӑшпӗр районсенчи финорганӗсен, перекет кассисен, ҫавӑн пекех тата партипе совет органӗсен руководителӗсем укҫапа япаласен лотерейин билечӗсене сарас ӗҫ ҫине кирлӗ пек пӑхман. Ӗҫҫыннисем хушшинче сарнӑ билетсемшӗн пухмалли укҫана та начар пухаҫҫӗ. Ҫакӑн пек районсен шутне чи малтанах Шӑмӑршӑ, Элӗк, Улатӑр, Вӑрнар, Комсомольски, Первомайски тата Советски районӗсем кӗреҫҫӗ. Ку районсенче лотерея билечӗсене сарас ӗҫ начар пыни — вӑл перекет кассисене пулӑшакан комиссисем начар ӗҫлениичен тата вӑл комиссисен ӗҫӗсене партин районсенчи комитечӗсем тӗрӗслесе тӑманнинчен, колхозниксемпе колхозницӑсем хушшинче массӑллӑ-ӑнлантарулӑ ӗҫе начар туса пынинчен килнӗ. Ҫавӑнпа ку районсенче ҫак ӗҫсене халех вӑйлатса ямалла, билетсемшӗн укҫа пухассине ҫитес кунсенчех вӗҫлесе ҫитермелле, лотерея билечӗсене подписчиксене валеҫсе памалла.

Ҫак ӗҫре малта пыракан Вӑрмар районӗ республикӑра кая юлакан районсемшӗн пример пулса тӑрать. Ку районра лотерея билечӗсене сарас ӗҫе партипе совет, комсомол тата профсоюз организацийӗсем активлӑн хутшӑнса ӗҫленӗ. Хаҫатсенче укҫапа япаласен 4-мӗш лотерейи ҫинчен пӗлтерӳ тухсанах, кашни колхозра тата кашни предприятире докладсемпе калаҫусем туса ирттернӗ. Вулав ҫурчӗсем ял Совечӗсем ҫумӗнче укҫапа япаласен 3-мӗш лотерейин хӑш билечӗсем выляса илнине тӗрӗслессине организациленӗ. Кашни колхозник, колхозница хӑй миҫе тенкӗлӗх ҫырӑнассине малтанах паллӑ тунӑ, укҫине те хатӗрленӗ, ҫапла вара билетсемшӗн укҫа пухасси те ҫав кунах пуҫланнӑ. Хатӗрленӳ ӗҫне тата ӗҫҫыннисем хушшинче массӑллӑ ӑнлантару ӗҫне лайӑх туса пынипе Вӑрмар районӗ лотерея билечӗсене сармалли плана икӗ кун хушшинче ытлашшипех тултарса, укҫине те пухса пӗтернӗ.

Ытти районсенчи перекет кассисенче, финанс органӗсенче ӗҫлекенсен те ку тӗлӗшпе ӗҫе тӗпренех лайӑхлатса, лотерея билечӗсемшӗн пухмалли укҫана вӑхӑтра пухса пӗтерсе, билетсене подписчиксене салатса парас ӗҫе 1945 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпех вӗҫлемелле.

А. МИХАЙЛОВ.

Йĕпреç, Красноармейски МТС-сем хыççăн Шăхасан МТС-ĕ те тракторсене юсамалли плана ăнăçлăн пурнăçларĕ

ШĂХАСАН, декабрĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС коллективĕ IV-мĕш кварталта тракторсем юсамалли плана ăнăçлăн пурнăçларĕ. План тăрăх 16 трактор юсас вырăнне 19 трактор юсарăмăр. Вăл шутра текущи ремонтпа 13 трактор, капитальнăй ремонтпа 6 трактор юсаса кăлартăмăр.

МТС директорĕ КОНСТАНТИНОВ.
Старши механик СЕВЕРОВ.

* * *

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ И. А. Шорников юлташ Шăхасан МТС директорĕ Константинов юлташ, старши механик Северов юлташ ячĕсемпе, Шăхасан МТС коллективне саламлă телеграмма янă тата МТС коллективĕ хăй çине илнĕ обязательствăна — январĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнпур тракторсене юсаса пĕтерес ĕçе чыслăн пурнăçласса шанса тăни çинчен пĕлтернĕ.

Ăмăрту вăйĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. МТС коллективĕ, Сталин юлташăн доклачĕпе хавхаланса ĕçлесе, 4-мĕш кварталта тракторсем юсамалли плана ытлашшипех тултарчĕ. План тăрăх 16 трактор юсамаллаччĕ, ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 17 трактор юсанă.

Трактористсем, плугарьсем тата комбайнерсем пурте тракторсем юсас ĕçе хутшăннă. Юсас ĕçре уйрăмăнах МТС-ăн старши механикĕ М. Афанасьев, МТМ мастерĕ А. Павлов юлташсем тимлĕн ĕçлеççĕ. Вĕсем трактористсене вăхăтра пулăшаççĕ, кирлĕ ыйтусем тăрăх калаçусем ирттереççĕ. Павлов юлташ кăçал сахал мар рационализаторла сĕнӳсем пачĕ, вĕсене кулленхи ĕçре пурнăçласа пынă.

Çавăнпа та, тракторсем юсас ĕçре пысăк чăрмавсем пулнă пулин те, ĕç чарăнса тăмарĕ. Чи малтан Степанов юлташ ертсе пыракан бригада ноябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне икĕ трактор юсаса пĕтерчĕ. Юсав пахалăхĕ лайăх. Бригадăри трактористкăсем Ксения Васильева, Рима Степанова, Матрена Терентьева хăйсене панă ĕçе пурнăçлас тесе тимлесе ĕçлерĕç. Карай ялсоветĕнчи колхозсенче ĕçлекен трактористсен бригади те (бригадирĕ Егоров юлташ) ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ. Бригадăри трактористкăсем А. Антокова, А. Борисова питĕ лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен тракторĕсене хăйсемех юсарĕç. Ку бригада ноябрĕн 15—16-мĕшĕсем тĕлне лайăх пахалăхпа икĕ трактор юсаса пĕтерчĕ.

Тракторсене çуракине хатĕрлес тĕлĕшпе илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçласа пырассишĕн трактористсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Кăçалхи çул тракторсене хăвăрт тата пысăк пахалăхпа юсаса пĕтерес тесе, пирĕн МТС коллективĕ Вăрнар МТС-не ăмăртăва чĕнчĕ. Ăмăртура малта тухас хавасăхпа ĕçлесе, С. Иванова, П. Николаева, Х. Киселева, Г. Алексеева тата М. Петрова трактористкăсем хăйсен тракторĕсене срокчен юсаса пĕтерчĕç. Çакăн хыççăнах Чадукассинчи трактор бригадине пулăшрĕç. Çапла пĕр-пĕрне пулăшса пынипе пула, МТС квартал планне срокчен пурнăçлама пултарчĕ.

Анчах та начар ĕçлекен бригадăсем те пур-ха. Мартынкасси, Именкасси, Исаково тата Байсубино ялсовечĕсенчи колхозсенче ĕçлекен трактор бригадисем тракторсем юсас енĕпе начар ĕçлеççĕ. Çак бригадăсем хăйсен ĕçне кирлĕ пек организацилемен-ха. Халĕ вĕсене пулăшас, малта пыракан бригадăсен опытне сарас тĕлĕшпе МТС дирекцийĕпе парторганизаци кирлĕ мерăсем йышăнаççĕ.

Г. ПРОКОПЬЕВ.
МТС-ри парторганизаци секретарĕ.

15 трактор юсанă

ЙĔПРЕÇ, декабрĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен Сталин юлташ тунă доклада трактористсемпе трактористкăсем хушшинче тĕплĕн сӳтсе-явни ĕç тухăçлăхне палăрмаллах ӳстерчĕ. Тракторсене вăхăтра юсани пысăк вырăн йышăннине шута илсе, МТС коллективĕ тракторсене юсас ĕçре социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ячĕ. Ноябрĕн 24-мĕшĕ тĕлнех МТС IV-мĕш кварталта тракторсем юсамалли плана пурнăçларĕ. Капитальнăй ремонтпа 7 трактор, текущи ремонтпа 8 трактор юсаса кăлартăмăр. 1-мĕш бригада (бригадирĕ Яковлев юлташ), 9-мĕш бригада (бригадирĕ Алексеев юлташ), 11-мĕш бригада (бригадирĕ Макаров юлташ) 2-шер трактор юсаса кварталти плана срокчен пурнăçларĕç. Халĕ килес çулхи 1-мĕш кварталта юсама палăртнă тракторсене юсама тытăнтăмăр.

Г. ИВАНОВ,
МТС директорĕ.

Çуракине пикенсех хатĕрленеççĕ

ЕЛЧĔК, декабрĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри малта пыракан Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз тата унпа ăмăртакан «Марс» колхоз, «Осоавиахим», Ленин тата Пушкин ячĕпе тăракан колхозсем вăрлăх фондне çителĕклĕ таран тырă уйăрнă.

«Марс» колхоз вăрлăх фондне 1329 центнер тĕштырă, 24 центнер кантăр вăрлăхĕ, 630 центнер çĕрулми уйăрнă. Вăрлăхлăх тырăсене уйрăм амбарсене хунă, вĕсене пĕтĕмпех пĕр хут аласа тасатнă, халĕ иккĕмĕш хут триерпа сортлаççĕ. Паянхи кун тĕлне çуррине ытла сортланă та ĕнтĕ. Çавăн пекех хире тислĕк кăлараççĕ. Кĕркунне 5.800 лав тислĕк уя кăларнă. Колхоза çуракинче ĕçлеме 38 плуг кирлĕ, вĕсенчен 32 плугне юсанă. Колхозăн 4 сеялка пур, вĕсене пĕтĕмпех юсаса, юр кĕмен сарайне тирпейлесе хунă.

Колхозниксене агротехника ыйтăвĕсемпе паллаштарас тесе, агрокружок организациленĕ. Кружока колхоз председателĕ Гаязов юлташ хăй ертсе пырать. Калаçусене агрономсем, колхозри пысăк опытлă бригадирсем ирттереççĕ. Кружокра 32 çын вĕренет. Паянхи кун тĕлне 4 заняти ирттернĕ.

Фермăсенче ĕçлекенсем тата конюхсем валли зооветкружок организациленĕ. Çак кружок та халех ĕçлеме тытăнмалла.

П. КОЗЛОВ.

Вăрлăх фондне тырă çителĕклĕ уйăрмалла

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, декабрĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсем, вăрлăх тата ытти фондсене çителĕклĕ уйăрнă хыççăн, колхоз тупăшне ĕçкунĕ тăрăх валеçме хатĕрленеççĕ. «Совет», «Путь социализма», Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем государство умĕнчи пур парăмсене те парса татнă, вăрлăх фондне те çителĕклĕ уйăрнă. «Коминтерн» тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем вăрлăхлăх уйăрнă тырра пĕтĕмпех сортласа хунă.

Анчах та «Танкист», «Красные Четаи» тата Энгельс ячĕпе тăракан колхозсем çак вăхăта çитсе те вăрлăх фондне кирлĕ таран хывса хăварман, вăрлăха аласа тасатассине те организацилемен. Çак колхозсем иртнĕ çулта та вăрлăх фондне çителĕклĕ тырă уйăрман пирки çуракине вăрăма тăсрĕç.

Вăрлăх фондне чи лайăх тата çителĕклĕ тырă уйăрмалла, ăна сортлассине халех организацилемелле.

З. ТИХОНОВ.

Комсомол—шкул директорĕн помощникĕ

Пирĕн шкулти комсомол организацийĕ кăçалхи вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа сахал мар паха ĕçсем турĕ. Ачасем вĕренӳре ăлкĕрсе пырасси, вĕсен тавракурăмĕ, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, нумай лайăхланчĕç. Кунта урокра вĕреннĕ материалсăн пуçне çав темăпа ытти литературăна вулассине кирлĕ пек йĕркеленĕ. Комсомол организацийĕ çак ĕçе ятарласа хăй тĕрĕслесе, ертсе пырать. Вуланă кĕнекесем тăрăх вĕренекенсем калаçусем ирттереççĕ, час-часах хăшпĕр кĕнекесене пĕрле сӳтсе яваççĕ.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче комсомол организацийĕ вĕреннĕ материалсем тăрăх наглядлăй пособисем хатĕрлес тĕлĕшпе шкул дирекцине нумай пулăшрĕ. Кунта пур классенче те писательсен творчестви тăрăх йĕркеленĕ выставкăсене, истори, естествознани тата математика предмечĕсемпе ачасем тунă наглядлăй пособисене, коллекцисене курма пулать. Вăл наглядлăй пособисемпе вренӳре усă курнисĕр пуçне комсомол организацийĕ час-часах вулакансен конференцийĕсене туса ирттерет.

Комсомол организацийĕ пуçарнипе кăçал пирĕн шкулта пĕтĕмпе 11 выставка йĕркеленĕ. Уйрăмах VII-мĕш класри комсомолецсен «Борьба Руси за независимость» тата V-мĕш «Б» класри пионерсем йĕркеленĕ «Да здравствует могучий Советский Союз!» выставкăсем хăйсен пахалăхĕпе тата содержанийĕпе вĕренекенсене нумай интереслентереççĕ, вĕренӳпе харпăрхăй тавракурăмне хăпартас ĕçре пысăк пулăшу параççĕ. Эпир выставкăсене класс илемĕшĕн çеç тумастпăр. Класс руководителĕсен ертсе пынипе, вĕренекенсем çав выставкăсенчи экспонатсем тăрăх лекцисемпе калаçусем ирттереççĕ, искусствăпа политика ыйтăвĕсемпе паллашаççĕ.

Калас пулать, кăçалхи вĕренӳ çулĕнче шкулти пионер организацийĕ те хăйĕн ĕçне пысăк тимлĕхпе туса пырать. Старши вожатăй Ф. Александрова ертсе пынипе, пионерсем хăйсен шкулĕн чысĕшĕн питех те пысăк кăмăлпа ĕçлеççĕ. Шкулта кашни кулленех мĕнле те пулин çĕнĕ ĕç пулса иртет. Пионерсене илес ĕç те кунта чаплăн пулса иртет. Пионерсен 5-мĕш дружинин начальникĕ пулса VII-мĕш класра вĕренекен комсомолец Валериан Ефимов ĕçлет. Вăл темиçе çул ĕнтĕ пур предметсемпе те отлично вĕренсе пырать. Ытти ачасене вĕренӳре те, обществăллă ĕçре те пример кăтартать.

Çак кунсенче шкулта вырăссен чаплă баснописецĕ И. А. Крылов вилни 100 çул тултарнă ятпа литература вечерĕ пулса иртрĕ. Комсомол тата пионер организацийĕсем çак юбилее хатĕрленес тĕлĕшпе активлăн ĕçлерĕç. Комсомолец М. Тимофеев аслă поэтăн юптарăвĕсем тăрăх 19 пысăк картина тата Крыловăн портретне ӳкерчĕ. Вуншар ача унăн произведенийĕсем тăрăх инсценировкăсем çырнă. Юбилей кунĕ тĕлне кашни вĕренекен Крыловăн пурнăçĕпе творчествине, унăн сăввисене пăхмасăр калама вĕреннĕ.

Комсомол шкул дирекцине хуçалăх ыйтăвĕсене вăхăтра татса парас тĕлĕшпе те нумай пулăшать. Кăçал вĕренӳ çулĕ пуçланиччен нумай маларах комсомолецсем шкул валли вутă хатĕрлерĕç. ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ В. Николаева куллен 3—4 кубометр туса, ыттисене те хаваслантарса пычĕ. Эпир пĕр эрне хушшинче хĕл каçмалăх вутă хатĕрлерĕмĕр. Çавăн пекех шкул участокĕсем çине акса хăварнă тырпулпа пахча-çимĕçсене пухса кĕртес ĕçре те комсомолецсем чи лайăх организаторсем пулса ĕçлерĕç. Çапла, эпир вĕренекенсене вĕри апат çитерме продуктсем çителĕклех хатĕрлерĕмĕр. Çак кунсенче эпир шкула инçетрен çӳрекен ачасем валли общежити уçас ыйтăва лартрăмăр. Паллах, дирекци ку ыйтăва хăй татса панă. Анчах ăна йĕркене кĕртес ĕçре комсомолецсем сахал мар ĕçлерĕç. Вĕсем общежити çуртне тирпейлесе ăшăтас, культурăллă çурт тăвас енĕпе ырми-канми ĕçлерĕç. Халĕ пирĕн 26 ача валли общежити пур.

Вĕренекенсем пушă вăхăта яланах усăллă ирттереççĕ. Комсомол организацийĕ шкул ачисен художествăллă пултарулăхне анлăн сарса ячĕ. Паллах, ку ĕç шкул дирекцийĕпе учительсем хутшăнса ĕçлемесĕр пулмасть. Вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпах шкул директорĕ çирĕплетнĕ план тăрăх вечерсем, докладсем, концертсем йĕркеллĕн пулса пыраççĕ. М. Григорьев юлташ ертсе пыракан хор тата Ф. Кроликовăн спорт коллективĕ вĕренекенсемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсем хушшинче пĕрре кăна мар хăйсен пултарулăхне кăтартнă.

Комсомолец — тăван çĕршыва чунтан юратакан çамрăк. Унăн хăй пурăнакан район, республика тата çĕршыв историне лайăх пĕлмелле. Çак тĕлĕшпе пирĕн шкулта чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Чăваш республики XXV çул тултарнине уявлама хатĕрленнĕ май, шкулти комсомол организацийĕ халăх хушшинчи фольклора пухассине, шкул историне çырассине, республикăн историне вĕренессине организацилерĕ. Фольклор пухас ĕçре комсомолец-вĕренекенсем В. Николаева, П. Сергеева, Л. Порфирьева лайăх ĕçлеççĕ. Литература кружокĕн членĕсем Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнчи фольклора 5000 йĕрке ытла пухрĕç, вĕсем «Паянхи симфони» ятлă сборник йĕркелеççĕ. Учитель Е. Марков ертсе пынипе, Чăваш АССР-ĕн историне вĕренекенсен кружокĕ лайăх ĕçлет. Кĕçех вĕсем районсен, ялсен карттисене ӳкерес тата вĕсен географиллĕ пуянлăхне кăтартакан диаграммăсем туса пĕтереççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче çарпа физкультура ĕçне вĕренесси те лайăх пулса пырать. Комсомолецсем пуçарса пынипе шкулта «Учитель» тата «Смена» спорт обществисем лайăх ĕçлесе пыма пуçларĕç. Халĕ пирĕн яланах ĕçлекен спортгруппа, 35 вĕренекенрен тăракан йĕлтĕрçĕсен команди пур.

Çакна та палăртас пулать. Комсомол комитечĕн ĕçĕсем чăннипех йĕркеллĕ пулса пырасси, çавăн пекех дирекцин ĕç планĕсем пурнăçланса пырасси нумай чухне партин пуçламĕш организацийĕ çак ыйтусем çине тĕплĕн пăхнинчен килет. Партин ялти пуçламĕш организацин пухăвĕнче эпир яланах шкул ыйтăвĕсене лартса пынă. Учительсемпе вĕренекенсене вĕренӳпе воспитани тĕлĕшĕнчен тĕрĕс кăтартусем парса, парторганизаци шкул ĕçне нумай енчен лайăхлатма пулăшать. Партипе комсомол организацийĕсем пулăшнипе эпир шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те шкула явăçтартăмăр, чылай ачасене ăшă кĕпе-тумтирсем туса патăмăр.

Паллах, ку вăл — пирĕн ĕçĕн пуçламăшĕ çеç-ха. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче, уйрăмах 10-мĕш класран вĕренсе тухакан ачасем хушшинче, вĕренӳпе воспитани ĕçне нумай лайăхлатмалла. Çуркуннехи экзаменсене тĕплĕн хатĕрленес тĕлĕшре, паллах, шкул дирекцийĕн пĕрремĕш помощникĕ—комсомол организацийĕ пулмалла. Çапла тусан çеç эпир шкул чысне çӳлте тытма пултаратпăр.

С. СЕЛЕЗНЕВ,
Вăрнар районĕнчи Кĕçĕн Кипек вăтам шкулĕн директорĕ.

Государствăна 1945 çулшăн аш-какай параççĕ

ТАВАЙ, декабрĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин юлташăн историллĕ доклачĕ çине ответлесе, районри колхозсемпе колхозницăсем государство умĕнчи обязательствăсене ăнăçлăн тултарса параççĕ. Районри 32 колхозран 22-шĕ государствăна аш-какай памалли обязательствăна пĕтĕмĕшпех пурнăçланă. 1945 çулшăн та 519 центнер панă. Вăл шутран Енĕш Нăрвашри «Красная Чувашия» колхоз 106 центнер, Тĕнел ялĕнчи «Çĕнĕ çул» колхоз 40 центнер, Нăрваш Кошкăри «Искра Ильича» колхоз 38 центнер аш-какай панă. Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕ, фронтовик арăмĕ Евдокия Корнилова — хăй килĕнче пăхса ӳстернĕ сысмине государствăна панă. Çапла вара вăл 1945 çулшăн аш-какай парса татнă тата 1946 çулшăн та панă.

А. КАХОВСКИЙ.

Мартин Андерсен Нексе Ленинградра

ЛЕНИНГРАД, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта Данири паллă писатель Мартин Андерсен Нексе килнĕ. Совет писателĕсен Союзĕн отделенийĕнче ăна Б. Лихарев, И. Груздев, СССР халăх артисчĕ Юрьев, РСФСР халăх артисчĕ Н. Черкасов тата ыттисем те ăшшăн саламланă.

Нимĕçсем Данине тытса илсен, вĕсем демократи представителĕсене хытă хĕсĕрлеме пуçланă. Нексе произведенийĕсене библиотекăсенчен пухса илнĕ. Ытти паллă писательсемпе, художниксемпе пĕрле ăна та арестленĕ те тĕрмене хупнă. Тĕрмерен кăларсан, вăл нумай вăхăт хушши хăйĕн тусĕсем патĕнче вăрттăн пурăннă. Чирлĕ пирки унăн госпитале выртмалла пулнă. Анчах унта та Гитлер шыравçисем çӳренĕ. Ют çĕршыва тармалли çеç тăрса юлнă. Вара вăл тарнă.

Вăрçă вăхăтĕнче Мартин Андерсен Нексе фашизмпа кĕрешнине кăтартакан пысăк роман çырма шут тытнă. Çав романăн икĕ сыпăкне çырса пĕтернĕ ĕнтĕ.

Пичет представителĕсене Нексе çапла каланă:

— Фашистсем вĕçĕ-хĕррисĕр хĕсĕрлесе пурăннă хыççăн эпĕ халĕ ирĕклĕ Совет Российинчи сывлăшпа сывлатăп, чаплă Ленинграда куратăп, çакăншăн эпĕ телейлĕ, —тенĕ.

Майданекра тискер ĕçсем тунисене суд тунӗ

ЛЮБЛИН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла пуçкасакансен — Майданекра тискер ĕçсем тунисен ĕçне пăхса тухакан суд хăйĕн ларăвне уçсан, адвокатсем суда çапла каланă: эпир айăпланакан гитлеровецсене хӳтĕлеме килĕшместпĕр, мĕншĕн тесен поляк халăхĕн тăшманĕсене, мирлĕ çынсене вĕлернĕскерсене, хӳтĕлени—пите намăс ĕç туни пулать, тенĕ. Суд вара çав адвокатсене официальнăй йĕркепе хӳтĕлекенсем пулма хăварнă.

Суд пĕрремĕш кунĕнче айăпланакансенчен ыйтса тухнă. Айăпланакан Тернес çапла каланă: эпĕ Майданекра пурăннă вăхăтра унта газсемпе пăчăхтарса çеç 60.000 çынна ытла вĕлернĕ, тенĕ.

Айăпланакан Отальд Майданекра хупса усранă çынсене мĕнле-мĕнле майпа вĕлерни çинчен вăскамасăр та хумханмасăр каласа парать.

Прокурор Отальдран ыйтать: лагерьте эсĕ ачасене курнă-и?—тет.

Айăпланакан çапла калать: унта эпĕ тĕрлĕ çулти ачасене те курнă, унта кăкăр ĕмекен ачасем те пурччĕ,—тет.

— Ачасене мĕнле пăчăхтарса вĕлерни çинчен каласа парăр,—тет прокурор.

— Газ камерисем патне ачасене автомашинăсемпе илсе пыратчĕç те вĕсене унта антаратчĕç. — тесе калать айăпланакан Отальд. — Ачасем вилĕм камерине кĕресшĕн марччĕ, вĕсем теме туйнă пулмалла. Вĕсене çав камерăна кĕме ӳкĕтлеме тиветчĕ.

Крематорире çунтарма унта час-часах чĕрĕ çынсенех илсе пынă. Çавăн çинчен айăпланакан Отальд çапла калать: эпĕ крематори патне тăллана çынсене илсе пынине курнă. Вĕсене крематори кăмакине аллăшарăн кĕртетчĕç. Çунтарма илсе пыракан çынсем хушшинче тыткăна лекнĕ совет çыннисем те пурччĕ.

Айăпланакан Герстенмайер çапла каласа панă: эпĕ Майданека пырсан, мана çапла калатĕç: лагерьти кăмакасенче 200.000 çынна яхăн вĕлернĕ ĕнтĕ, терĕç. Çак тĕлĕшпе Майданек вăл Дахау еверлĕ, тет Герстенмайер.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Линних хулинчен хĕвеланăçнерехре (Германире), Гейленкирхен — Юлих районĕнче, тăшмана атакăласа, Кослар хулине тăшмантан тасатнă. Çав секторти ытти вырăнсенче малалла кайнă.

Дюрен—Гюртген районĕнче (Германире) союзниксен çарĕсем Френц хулинчен çурçĕртерехре ларакан Инденпа Ламмерсдорф патĕнче тăшман контратакисене сирсе янă. Çав икĕ хулара та çапăçусем пыраççĕ. Юнгерсдорфра тăшман хирĕç тăма пăрахнă. Хаяррăн çапăçнă хыççăн Лангервее хулине тăшмантан тасатнă. Дюрен хулинчен хĕвеланăçнерехре, Мероде районĕнче, союзниксен çарĕсем ăнăçусем тунă. Çав районран кăнтăртарахра союзниксем тăшмана Гюртген вăрманĕнчен хĕссе кăларса пынă. Клейнгау тата Гюртген хулисене йышăннă.

Саар шывĕн улăхĕнче союзниксен çарĕсем хăйсен позицийĕсенче çирĕпленсе ларнă тата хĕвелтухăçнелле малалла кайнă. Союзниксен çарĕсен чăсĕсем Карлингеч (Лотаринги) çывăхĕнче тăраççĕ, ытти чăсĕсем Саарунион патне пырса тăнă, унта вĕсем пĕр çӳллĕ вырăна хăйсен аллинче тытса тăраççĕ.

Союзниксен çарĕсем Гагенау хулинчен хĕвеланăçнерехре, Вогез тăвĕсен районĕнче тата Эльзас тӳремĕнче, Рейн шывĕнчен хĕвеланăçнерехре, нумай тĕлте çитĕнӳсем тунă. Вогез тăвĕсем урлă каçнă подразделенисем, тăшман вăйлă хирĕç тăнине пăхмасăрах, Андлау хулине йышăннă. Страсбург хулинчен кăнтăралла кайса, Эрштейн хулине тытса илнĕ. Союзниксен çарĕсен чăсĕсем Матценгейм патне пырса тăнă. Вогез тăвĕсен кăнтăр районĕнчи çӳллĕ вырăнсенче те ăнăçусем тунă.

Союзниксен авиацийĕ тăшман тылĕнчи тата çапăçу районĕнчи вăрçă объекчĕсене хаяррăн тапăннă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 30-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă. 5-мĕш армин тĕп участокĕнче тăшман контратакăсем тунă та Болонья хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри Монте Кастеллаго ятлă сăрт районĕнче кăшт малалла кайнă.

Союзниксен авиацийĕ Югославипе Албани чиккипе юнашар пыракан çулсем çинчи тăшман транспорчĕсен колоннисем çине тата Çурçĕр Албанири кĕперсем çине бомбăсем пăрахнă. Иртнĕ каç йывăр бомбардировщиксем Линцпа Инсбрук хулисенчи (Австри) тата Мюнхенри вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Ибар улăхĕнчи чугун çул пĕтĕмпех Югослави чăсĕсен аллинче тăрать. Нови Пазар районĕнче хупăрласа илнĕ нимĕçсене хĕснĕçемĕн хĕссе пыраççĕ.

Черногорире ирĕклĕх çарĕн чăсĕсем Ульцин хулине тытса илнĕ, нимĕçсен çĕмĕрсе тăкнă чăсĕсене, Скадар еннелле чакаканскерсене, хăваласа пыраççĕ. Даниловград секторĕнче хупăрласа илнĕ нимĕç чăсĕсен активлăхĕ чакнăçемĕн чакса пырать. Çав районра 10 кун хушшинче 3.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ е амантнă.

Хĕвелтухăç Боснире Югослави чăсĕсем Яня хулине тытса илнĕ тата Дрина шывĕн улăхне тасатса пыраççĕ. Далмацире Книни секторĕнче хупăрласа илнĕ нимĕçсен группировкине пĕтерсе пыраççĕ. Виçĕ кун хушшинче унта нимĕçсен, усташăсен тата четниксен 1.000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ е амантнă.

БЕЛГРАДРА ХĔРЛĔ ÇАР ВОИНĔСЕН ПАМЯТНИКНЕ ЛАРТНĂ

БЕЛГРАД, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Белградра Белград хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçса вилнĕ совет воинĕсене памятник лартнă.

Çав памятнике уçнă çĕрте Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕн, Серби халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен вечен, Югославири фашизма хирĕç кĕрешекен çамрăксен пĕрлешнĕ союзĕн тата ытти организацисен представителĕсем те пулнă.

Хаçатсем çав памятнике чаплăн уçни çинчен тĕплĕн çырса кăларнă. «Политика» хаçат çапла çырать: «Ирĕклĕхе çав тери хытă юратнине пула, красноармеецсем пирĕн çĕршыва килчĕç. Фашизм пусмăрланă мĕнпур халăхсене ирĕке кăларассишĕн кĕрешсе, вĕсем темиçе пин километр кайнă, йышлă ту хырçисем урлă, тарăн шывсем урлă, анлă тӳремсем урлă каçнă. Вĕсем пысăкран пысăк парне кӳнĕ, вĕсем халиччен пулман пек вăйлă кĕрешнĕ».

Бельгири лару-тăру

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Бельги правительстви çĕнĕ декрет пичетлесе кăларнă. Çав декрет полицие, пытарнă хĕçпăшала тупмашкăн, çуртсене тата граждансене ухтарма ирĕк парать.

ПАРИЖ, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, Бельги правительстви, тăшмана хирĕç тăракан организацисене хăйсен хĕçпăшалĕсене парттарасшăн пулса, халь те çирĕп мерăсем йышăнать. Полицейскисен йышлă отрячĕсем Брюссель урамĕсем тăрăх çӳреççĕ, çуртсене кĕрсе ухтараççĕ, тупнă пăшала тытса илеççĕ. Монсран Брюсселе каякан колоннăна тĕл пулсан, полицейскисем ăна хĕçпăшалсăрлантарнă та нумай çынна тытса хупнă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Брюссельтен çапла пĕлтерет: ĕнер трамвай рабочийĕсем забастовка тунă. Хулара политикăллă демонстрацисем пулса иртнĕ.

Хĕçпăшалсене тытса илесшĕн пулса, пĕтĕм çĕршывĕпех ухтарса çӳреççĕ. Ĕнер ирхине Брюсселĕн тĕрлĕ районĕсенче хĕçпăшаллă полицейскисем ларнă автомашинăсем çӳренĕ. Винтовкăсемпе патронсем нумай тытса илнĕ пуль тесе шутлаççĕ.

ПОЛЬШĂН ЭМИГРАЦИРИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ÇĔНĔ СОСТАВĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Квапинский Польшăн эмиграцири çĕнĕ правительствине тума хăтланни пăчланса ларнă хыççăн эмиграцири «президент» Рачкевич премьер-министр пулма Томас Арцишевские лартнă. Арцишевский вара çĕнĕ правительство тунă. Правительствăна Кукельпе Квапинский те кĕнĕ. Кукель—оборона министрĕ. Квапинский — промышленноçпа суту-илӳ тата суднăсем çӳретес ĕçĕн министрĕ пулса тăнă. Виçĕ министрăн вырăнĕсем пушă-ха, мĕншĕн тесен вĕсене хресченсен партийĕн представителĕсем валли хăварнă (правительствăна кĕме килĕшмен Миколайчик çав партин членĕ).

ХРОНИКА

▲ СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ И. К. Седин юлташа Нефть промышленность Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

▲ СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Нефть промышленность Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме Николай Константинович Байбаков юлташа лартнă.

КĔСКЕН

● Нимĕçсем Норвегирен Германие фабрикăсемпе заводсен оборудованине илсе кайма хатĕрленеççĕ. Çак шутпа хăйне уйрăм комиссисем тунă. Çав комиссисем Норвеги предприятисенчи оборудование шута илеççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
декабрĕн 2, 3, 4-мĕшĕсенче
ИРХИНЕ
«ТИМУРПА УНĂН КОМАНДИ»
ятлă саслă фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16 сехетре.
КАÇХИНЕ
А. Островский драми тăрăх ӳкернĕ
«ГРОЗА»
ятлă саслă, илемлĕ фильм кăтартаççĕ.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
18, 20, 22 сехетре.

Çĕнтерӳллĕ халăх

(М. Н. Данилов-Чалдун. „Фронтра". Калавсемпе очерксем. Чăвашгиз. 1944 ç. 91 стр).

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар, Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, фашистла Германин çарĕсене хирĕç çапăçса историллĕ çĕнтерӳсем турĕ, совет çĕршывне нимĕç вăрă-хурахĕсенчен тасатса çитерчĕ. «Паянтан пуçласа яланлăхах пирĕн çĕр гитлерла ирсĕрсенчен тасалчĕ» (Сталин).

Пирĕн çарсем, гитлерла вăрă-хурахсене хăваласа пырса, Германи территорийĕ çине —Хĕвелтухăç Пруссие кĕрсе кайрĕç.

Хаяр та сĕмсĕр тăшман эпир тара юхтарса ĕçленĕ çĕрсене туртса илме, хамăр вăйпа тунă тырпула тата нефте туртса илме ăмсанчĕ. Вăл помещиксен влаçне каялла тавăрма, патша влаçне каялла тавăрма, вырăссен, украинецсен, белоруссен, литовецсен, латышсен, эстонецсен, чăвашсен, тутарсен тата Совет Союзĕнчи ытти мĕнпур ирĕклĕ халăхсен нациллĕ культурине, нациллĕ государствине пĕтерсе хума, совет халăхне чура туса хума пикенчĕ.

Тискер тăшман хăйĕн умне лартнă тĕллевсене пирĕн çĕр çине килсе кĕрсенех пурнăçа кĕртсе пыма пуçларĕ. Пирĕн колхозсен çĕрĕсене — помещиксене, заводсене — капиталистсене пачĕ. Совет халăхĕсене вĕлерсе пĕтерме, чĕрĕ юлнисене нимĕç чурисем туса хума тытăнчĕ. Ирĕклĕхе юрататкан совет халăхĕ, кар тăрса, хаяр тăшмана хирĕç кĕрешӳве тухрĕ.

Çаксем çинчен аса илтерет М. Н. Данилов-Чалдунăн «Фронтра» ятлă калавсемпе очерксен кĕнеки. Чалдун — пирĕн паллă писатель. Вăл граждан вăрçи çинчен çырнă произведенийĕсене вулакансем лайăх пĕлсе тăраççĕ. Уйрăмах унăн «Тилĕ хыççăн» ятлă калавĕ паллă вырăнта тăрать.

М. Н. Чалдун «Фронтра» ятлă кĕнекене тăшман пульлисемпе снарячĕсем хăйĕн пуçĕ урлă вĕçнĕ вăхăтра çырнă. Çавăнпа та вĕсем пирĕншĕн хаклă пулса тăраççĕ. Темĕнле йывăр условисенче çырма лекнĕ пулин те, Чалдун хăйĕн фронтри калавĕсемпе очеркĕсене çивĕч чĕлхепе, пысăк пахалăхпа çырнă. Ку калавсемпе очерксем хăй фронта каяс умĕн килте çырнă калавсемпе очерксенчен чылай лайăх тесе каласан та йăнăш пулмасть.

М. Чалдун хăйĕн калавĕсемпе очеркĕсенче нимĕç фашисчĕсем совет халăхне мĕнле пысăк хуйхă, хăрушлăх илсе килнине кăтартса парать. Нимĕç вăрă-хурахĕсем çĕршер те пиншер ачасене тăлăха тăратса хăварчĕç. «Ашшĕсемпе ывăлĕсем» ятлă очеркри Макаевскин вунă-вунпĕр çулхи ачи Петр — çав ачасенчен пĕри. Вăл амăшне нимĕçсем каторгăна тытса кайнă хыççăн ашшĕне шырама тухнă та, чылай çӳренĕ хыççăн, Хĕрлĕ Çарăн пĕр подразделенине, ашшĕ службăра тăнă çĕре çитнĕ. паттăр разведчик пулса тăнă.

«Вилĕмрен хăтăлнисем» ятлă очеркра эпир нимĕç тыткăнĕнчен тарнă вырăс çыннисене, сержант Иван Перепелкинпа Ляля Красновăна куратпăр. Акă, сĕм суккăр Лизавета Егоровна, вăрçăччен колхоз председателĕ пулнăскер. Нимĕçсем яла пырса кĕрсен, колхозăн пурлăхне туртса илсе, Брянцев улпут ывăлне пăраççĕ. Вăрçăччен пуян пурнăçпа пурăннă колхозниксене улпут чурисем туса хураççĕ. Анчах ирĕклĕ пурнăçпа пурăннă совет çыннисем нимĕç чурисем пулассăн мар. Хăйсене пăхăнманшăн нимĕçсем Лизавета Егоровнăн икĕ куçне те хĕртнĕ пăшатанпа тĕксе шăтараççĕ.

Чăваш халăхĕ вырăс çĕршывне яланах хăйĕн Тăван çĕршывĕ тесе шутланă. Вырăс халăхĕшĕн килсе тухнă хăрушлăх чăваш халăхĕшĕн те хăрушлăх пулнă. Çавăнпа та чăваш халăхĕ яланах тăшмана хирĕç вырăс халăхĕпе пĕрле çапăçăва тухнă. Çапла, чăваш халăхĕн ывăлĕсем нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç пынă Ливони вăрçинче те, нимĕçсене хирĕç çичĕ çул пынă вăрçăра та, Минин ополченийĕсенче те, 1812 çулхи Отечественнăй вăрçăра та, 1914—1918 çулсенче нимĕçсене хирĕç пынă вăрçăра та, граждан вăрçинче те паттăррăн çапăçнă.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан Отечественнăй аслă вăрçăра чăваш халăхĕн ывăлĕсем, чăваш халăхĕн традицине çӳлте тытса пырса, нихăçанхинчен те паттăррăн çапăçаççĕ. Çирĕм пине яхăн çынна правительство орденсемпе медальсем панă. 25 çын ытла Совет Союзĕн Геройĕ ятне илчĕç.

Совет халăхĕн ывăл-хĕрĕсем, Хĕрлĕ Çар ретне тăрса, нимĕç бандичĕсене хирĕç каламаçук пысăк хăюлăхпа, паттăрлăхпа кĕрешеççĕ. Пирĕн халăх тăшмана курайми пулса çитрĕ. тăшманăн тискер ĕçĕсем çав курайманлăха татах та çивĕчлетрĕç. Тăшман вăхăтлăха тытса илнĕ районсенче пирĕн совет çыннисем тăшмана чăтмалла мар условисем туса пачĕç. Нумайĕшĕ партизан отрячĕсене кайса халăхшăн тавăрма тытăнчĕç. Çакăн çинчен «Кузьма Кукаев», «Кĕтмен юрату» т. ыт. очерксенче кăтартса панă. Партизансен ретĕнче алла хĕçпăшал тытса кĕрешме пултарайманнисем те ытти тĕрлĕ мелсемпе тăшмана хирĕç кĕрешрĕç. Акă, Соломенида Яковлевна нимĕç офицерне, хăйне мăшкăланăскерне, вĕренĕ шывпа сапса ăшалать («Вĕренĕ шыв»). Хĕрлĕ Çар ретĕнчи пур боецсем те харсăрланса çитрĕç. Тăшмана курайманлăх Самсонов красноармееца, вăрçăччен автан пусма та хăранăскерне, хăюллă та паттăр боец, тăшманăн хăрушă танкне хирĕç пĕччен тăрса çапăçма пултаракан боец туса хурать («Красноармеец Самсонов»).

Хĕрлĕ Çара пирĕн паттăрла тыл пулăшса пычĕ. Тылри çынсем Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал, боеприпассем, танксем, самолетсем, çимелли-тăхăнмаллисем ытлăн-çитлĕн парса тăчĕç («Сыру»). Ахальтен мар ĕнтĕ Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă историллĕ докладра Хĕрлĕ Çарпа пĕрлех тылри совет çыннисен ĕçĕсене те пысăка хурса пахаларĕ.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме совет халăхне, Хĕрлĕ Çара пирĕн большевиксен партийĕ ертсе хавхалантарса пычĕ. Коммунистсем пур çĕрте те чи малти ретре тăрса ырă тĕслĕх кăтартса пыраççĕ. Çав чаплă большевиксене Чалдун хăйĕн «Ту витĕр» калавĕнче кăтартса парать. Вăтă коммунист Илюшин пек харсăр та паттăр коммунистсем совет халăхне хăюллă кĕрешӳ пуçĕнче тăрса ертсе пычĕç. Большевиксен партийĕ совет халăхне çĕнтерӳ патне илсе çитерчĕ.

Писатель Чалдун фронтăн йывăр условийĕсенчех пиçсе çитнĕ япаласем пачĕ. Вăл, Хĕрлĕ Çар ретне тăрса, тăван çĕршыва сыхлама хăйĕн ирĕкĕпе кайнă. Этемшĕн чи хаклине — хăйĕн пурнăçне вăл Тăван çĕршывшăн пачĕ.

Чăвашгиз М. Н. Данилов-Чалдунăн фронтра çырнă калавĕсемпе очеркĕсене уйрăм кĕнеке туса кăларнине ырламалла. Хăшпĕр калавсемпе очерксенче уйрăм çитменлĕхсем пурри кĕнекен пахалăхне чакармасть. Эпир Чăваш совет писателĕсен Правленийĕпе Чăвашгиза, М. Н. Данилов-Чалдунăн чи лайăх произведенийĕсене суйласа илсе, пĕр томлă кĕнеке пичетлесе кăларма сĕнесшĕн.

М. А.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99. промышленноçпа ял хуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1, Управления полиграфпро ... при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.

НТ 04222